# В.К.МАГНИЦКИПЕ УНĂН ВĔРЕНЕКЕНĔСЕМ

Николай ПАНТЕЛЕЙМОНОВ

Н.В.НИКОЛЬСКИЙ В.К.Магницкий пирки яланах ырапа асанса каласа пана. Вал Хусанти семинарире, академире, университетра вĕреннĕ чухне каникул вахатĕн час-часах Василий Константинович патне килсе çӳренĕ. В.К.Магницкий Шамат, Янасал тарахĕн ' археологийĕ, этнографийĕ историйĕ çинчен каласа катартна ана, халапсем, легендасем пуçтарма, ĕлĕкхи улап таприсене тĕпчеме, этнографи ыйтавĕсемпе интересленме ыйтна. Чаваш халах историйĕ çинчен калана чухне хайĕн библиотекинчи XVII ĕмĕрхи авалхи ал çыру чĕркине тата XVIII, XIX ĕмĕрсенчи документсене катартна. Н.А.Фирсов çырна "Положение инородцев Северо-Восточной России в Московском государстве" /Казань, 1864/ тата Раççейĕн ытти халахĕсем çинчен çырна историпе паллаштарна. "Чаваш халахĕн историне çырман, анчах та ун çинчен выранти тата столицари архивсенче çырнисем пур", – тесе калана вал.

Николай Васильевич калана тарах академире вĕреннĕ чухне наукапа интересленме, наукана тĕпчеме В.К.Магницкий вĕрентни, ашшĕ пек канашсем пани питĕ выранла, пĕлтерĕшлĕ пулна. Кандидат диссертацине çырна чухне Никольский канаш пама ыйтса Магницкий патне çыру яна. Магницкий хуравлана: Шаматран 1900 çулхи раштав уйахĕн 7-мĕшĕпе 30-мĕш кунĕсенче çырна икĕ çыравĕ халь те архивра пур. Магницкий Никольские архив материалĕсемпе ытларах уса курма хушать. Н.В.Никольский 1901 султа Чулхулари, 1902 çулта Петербургри архивсенче ĕçлет. Хайĕнпе пĕрле И.Д.Никитина илсе каять, ана та архив, тĕпчев ĕçне явaçтарать.

Çак çамраксем хайсем çеç мар, вĕсен ашшĕсем те тусла пулна. Ун çинчен мана мамак, Ксения Лукинична каласа катартатчĕ. К.Е.Магницкий патĕнче Василий Никитичан шаллĕ Дмитрий Никитич Никитин икĕ çул хушши вĕреннĕ, ун патĕнче пуранна. В.К.Магницкий ашшĕ, Константин Егорович, пачашкара ĕçленĕ. И.Д.Никитин этнограф каласа пана тарах, Магницкий службана хаварт ирттернĕ. И.Д.Никитин ун пирки çапла çырать: "Ас таватап Магницкий аттеме. Чиркӳре курначчĕ ана. Çеттуй шыв тата хĕрес йатса пирĕн пата пычĕ. Алари кĕнекесене курсан, пуçран ачашласа илчĕ те:" Верен, вĕрен", – тесекларĕ. И.Д.Никитин кайран В.К.Магницкий патне час-часах пырса çӳренĕ. Магницкий хушна ĕçе пурнаçлана. Турра мĕнле вайпа ĕнентерни çинчен пĕлме хушна. Тĕшмĕшĕн сиенĕ çинчен те тĕрĕс анланма вĕрентнĕ. Çаванпа пуль Иван Дмитриевич пачашка ĕçне парахса атеист пулать, халаха çутта каларас тĕлĕшпе нумай ĕçлет, шкулсем уçать, шкулсенче вĕрентет, архивсенче тĕпчет, кĕнекесем пичетлесе каларать, этнографи, фольклор материалĕсем чылай пухать.

Константин Егорович тата Василий Константинович Магницкисен кĕнекисене мĕнле пĕтерни çинчен кашт калас килет. О.И.Кузьмина каçалхи пуш уйахĕн 17-мĕш кунĕнче каласа панине илсе катартатап: "Эпĕ 1929-1930 çулсенче Шаматри 6 çул вĕренмелли шкулта 5-мĕш, 6-мĕш класенче вĕрентĕм. Пирĕн шкула хирĕç пысак пӳрт туначчĕ. Унта В.К.Магницкий пуранна. Пӳрт йĕри-тавра карта тытначчĕ. Пĕррехинче 1930 çулта пире пионерсен вожатайĕ В.С.Громов /18-19 çул тултарнаскер/ В.К.Магницкий килне илсе кайрĕ. Эпир ларека Магницкий кĕнекисене йатса куçартамар. Ларекĕ чиркĕве хирĕç ларатчĕ. Ман шутпа, кайран çав кĕнекесене çунтарса яна. Ун чухне кĕнекесене хакла япала выранне шутламан".

Эпĕ Магницкисен кĕнекисене шырана, анчах нумайашне ниçта та тупаймарам. Тен çунтарса яна тесе тĕрĕсех калаççĕ. Кам та пулсан вĕсене сыхласа хаварнатак архива е библиотекана парсан лайах пулмалла. Эпĕ пĕр сан ӳкерчĕке реликви выранне упратап. Ана 1954 çулхи çурла уйахĕнче ӳкерттернĕ. Вал кун Советски районĕнчи /халĕ Етĕрне районне кĕрет/ Советски салинче Магницкий ячĕпе палак лартна.

Мана ку таранччен те В.К.Магницкийĕн музейĕ çукки пашархантарать. Унан музейне Етĕрне районĕнчи Советски ялĕнче уçма май пур. Етĕрне районĕн администрацийĕн пуçлахĕ Л.С.Софронов ку ĕçре пулашасса шанас килет. Тен В.К.Магницкийĕн кĕнекисене те çынсем музее парĕç.